# ЧĂВАШ ХОРĔ ПĔТĔМ РАҪҪЕЙРИ ЯЛХУҪАЙСТВИ ВЫСТАВКИНЧЕ

## 1. Малтан, ҫул ҫинче

Пирĕн чăваш хорĕ Ялхуҫайстви выставкине пыни акă ҫапла пулчĕ. Августăн 9-мĕшĕнче Мускавран Шупашкара телеграмма килнĕ. Унта каланă: Ялхуҫайстви выставкине Чăваш облаҫĕнчен юрлакансем, ташлакансем, музыкҫăсем, артистсем пымалла тенĕ. Вĕсем чăваш халăхĕн йăлисене, юррисене, чăваш искусствине кăтартма кирлĕ тенĕ.

Ҫав телеграмма илсен, Шупашкарти выставком чăваш хорне пухма тытăнчĕ. Хористсене пухма ялсене телеграмма ячĕ тата юри ятарласа ҫынсене хушса янă. Вара пĕр ик-виҫ кунтан хористсем Шупашкара персе те ҫитрĕҫ. Шупашкарта тепрер кун хатĕрленчĕҫ те Мускава тухса та кайрĕҫ.

Хористсем хушшинче эпĕ те лекнĕ пултăм. Августăн 13-мĕшĕнче прахут ҫине лартăмăр та тухса кайрăмăр Мускава. Мускавне ҫитиччен пирĕн Чулхулана кĕрсе тухмалла-ҫке-ха! Каятпăр. Пирĕн хористсем хавасланнипелен пит юрласшăн. «Атьăр-ха, ачасем, первăй класа хăпарса, юрласа анар»,— теҫҫĕ. «Атьăр»,— терĕмĕр. Хăпарса кайрăмăр. Прахут капитанĕ пире хăпартасшăн мар: эпир ҫăпатапа-ҫке-ха! Ыйтсан-ыйтсан чармарĕ — кĕрсе карăмăр.

Пирĕн Мускавра юрлама хатĕрленмелле вĕт-ха! Лайăхрах юрлама вĕренес пулать. Ҫынсем итлесе тăраҫҫĕ тесе, эпĕр тӳрех юрăсем юрласшăн. Калла-малла шутларăмăр та малтан гаммăсене юрлас терĕмĕр: юрламасăр пурăнса, пирĕн пырсем питĕрĕнсе ларнă, уҫмасан, сасă хитре тухмасть. Эпĕр сасăсене уҫнине илтсе, пер-

вӑй класа ҫынсем пырса тулчӗҫ. Нэпла улпутсем, интеллигентсем, тӗрлӗ ҫынсем. Ҫук, сасӑ уҫса пулмасть, юрринех юрлас пулать. Яра патӑмӑр!..

Шупашкар туйи, шурӑ туя,
Шупашкар туйи, шурӑ туя...

Халӑх лӑках пырса тулчӗ. «Камсем кусем? Мӗнле халӑх ку? Мӗнле чӗлхепе юрлатӑр эсир?» — тесе ыйтаҫҫӗ пиртен. Эпӗр калатпӑр: «Эпӗр чӑвашсем»,— тетпӗр. Шалт тӗлӗнеҫҫӗ: «Чӑвашсем апла юрлама пултараҫҫӗ-и?» — теҫҫӗ. «Юрлатпӑр акӑ»,— тетпӗр те тата малалла:

Пирӗн урам аналалла,
Шуса анать пӗр ҫуна...—

тесе илме пуҫлатпӑр.

Янтрать «мӗскӗн» чӑваш юррийӗ пӑрахутӑн первӑй класӗнче. Шутласан, ӗлӗкрех вӑл вырӑнта улпут таврашанчах сарӑлса ырӑ курса ҫӳренӗ. Халӗ пӑх-ха: чӑваш ачисем ҫӑпатапа кӗрсе тӑнӑ та юрра яра параҫҫӗ. Итлекенсем юрлакансене ал ҫупса мухтарӗҫ. Хальхи прахут капитанӗ пире: «Пашалстӑ, пашалстӑ!» — теме пуҫларӗ.

Юрласа чарӑнтӑмӑр. Пирӗн регента, Павлов юлташа, пӗр мусульманла тӑхӑннӑскер чӗнсе илчӗ. Кайран пӗлтӗмӗр: вӑл ҫын Кавказри аслӑ мулла, тет; хӑй консерваторинче вӗреннӗскер, музыка лайӑх пӗлекен ҫын, тет. Ҫав мулла вара пирӗн чӑваш музыкине хытӑ ырларӗ. «Атӑл тӑрӑх пурӑнакан халӑхсенчен чӑваш чи музыклӑ халӑх пулмалла»,— тесе каларӗ, тет.

Пирӗн хористсем аяла ансан пӗр вырӑна пухӑнса ларчӗҫ те кунӗпех, ҫӗрӗпех юрласах, янраса, музыка каласа ҫуйӑхса, кулса ларчӗҫ. Пирӗнпе пӗрле Чулхулана ҫитиччен пыракан вырӑссем тӗлӗнсе кайнӑ вара: «Халиччен эпир чӑваша кун пек вӑтанмасӑр хӑйӗн паттӑрлӑхне кӑтартма пултарнине нихҫан та курман»,— теҫҫӗ. Хористсем юрланӑ чух «я-ян!» кӑшкӑрса ярсан — пуҫсене пӑркаласа тӗлӗнсе анчах ларса пыраҫҫӗ.

## II. Мускава ҫитрӗмӗр

Мускав, Мускав... Мӗн тери пысӑк хула! Малтанах тӗлӗнсе кайрӑмӑр. Ҫуртсем ҫӳллӗ, урамра ҫын кӑткӑ пек йӗшӗлтетет. Мӗн ҫук анчах.

— Эй, тенор! Мӗн ҫӑварна карса пыратӑн? Автомобиль кӗрсе каять вӗт?

— Эсĕ ху малалла пăх: асту трамвай вагонĕ пĕç хуппине хĕсĕнсе ларĕ!..

Кулаççĕ, калаçаççĕ, çуйăхаççĕ Мускав хули урамĕсенче.

Общежитине çитрĕмĕр. Белоруссем пиртен малтан çитсе вырнаçнă, юрра яра параççĕ. Выставкăра юрлама хатĕрленеççĕ. «Миçе çын?» — тесе ыйтрăмăр. «Хĕрĕх çын»,— теççĕ. Апла каласан, пирĕн чĕре кĕртех тăвать: эпĕр ушкăнпе те вунçичĕ çын анчах тухнă, дирижерпа вунсаккăрăн. Пирĕн чĕре хĕрӳленсе каять. Эпĕр калаçатпăр: «Ачасем! Тавайăр эпĕр те паянах спевка тăвар?» — тетпĕр. «Тăвас, тăвас!» — тесе хавасланаççĕ. Каç пулсан тапратрăмăр юрлама, ташлама. Экскурсантсем курма пухăнаççĕ. Пирĕн хĕрсем пĕрерĕн-пĕрерĕн, икшерĕн-икшерĕн тухса ташлаççĕ. Пĕр стурăш пекскерне чăваш сикни килĕшмен пулмалла: пычĕ те чарасшăн. Коменданчĕ пычĕ те: «Эсĕ мĕн тума чаратăн, ташлĕçин?» — тет. Тата пĕр экскурсанчĕ калать: «Ташлăр, ташлăр»,— тет. Эпĕр кунта вилме килмен вĕт; эпĕ хам старик пулсан та хĕпĕртесе пăхса тăратăп»,— тет. Вара пушшĕ хытă юрласа, ал çупса, сиксе ташларăмăр. Пире ырласа ал çупрĕç. Çапла малтанхи каçне маттурланса çывăрма выртрăмăр.

Выставка уçăлнă кунне чăвашла чăлт-шурă тумлантăмăр та Вак халăхсен тĕп комиссариачĕ умне пухăнтăмăр. Унта пирĕн чăвашсем чылай пухăннă. Вара ушкăнпе организациленсе, билетсăрах выставкăна кĕрсе кайрăмăр. Выставка уçăлсан, пурте хамăрăн чăваш пӳртне кайрăмăр. Унта тĕрлĕ организацисем ялавсемпе пынă чух эпĕр туха-туха чăвашла юрласа патăмăр. «Эсĕр камсем?» — тесе ыйтатпăр. «Эпĕр московски рабочисем»,— теççĕ. Эпĕр харăс тăратпăр та яра паратпăр:

Ылханлă, выçăхнă чурасен
Мĕнпур тĕнчи, харăсах тăр!..

— Браво! Браво! — тесе ал çупаççĕ рабочисем.— Тата юрласа парăр,— теççĕ пире.

Лутраях та шĕшкĕ,
Сарă мăйăр...

Çуратпăр. Пире тата юрлаттараççĕ. Çапла каçчен тĕрлĕ хăнасене кӳртрĕмĕр те юрлама ывăнса çитрĕмĕр. Вара хамăр та выставка тăрăх курма тухса кайрăмăр, ăçта кĕмерĕмĕр! Дальневосточнăй республикин павильонне кĕтĕмĕр те пăхса çӳретпĕр. Курма кĕнĕ çынсем павильон-

ри япаласене те пăхаççĕ, пире те пăхаççĕ: «Эсĕр мĕнле халăх?» — теççĕ. «Чăвашсем,— тетпĕр,— ыран павильонра пулатпăр, юрăсем юрласа паратпăр», — тетпĕр.

Павильонра юрлама çăвар уçсанах халăх чăтах пырса тулать, каçчен юрласан та халăх саланас çук. Çаплах: «Юрлăр!» — теççĕ. Хуть те кирек кам пырсан та пурте чăваш музыкине тăнласа итлеççĕ, кайнă чух ырласа мухтаса тухса каяççĕ. Малтанхи хут хамăр çинчен çапла ыр сăмахсем илтрĕмĕр.

## III. Малтанхи смычкăра

Августăн 22-мĕшĕнче малтанхи смычка пулчĕ. Кăнтăрла иртсен 5 сехетре выставкăн аслă площадĕнче митинг пулчĕ. Хĕрлĕ трибуна çинчен Луначарский сăмах каларĕ. Халăх тавралла пинĕ-пинĕпех итлесе тăрать. Вăл халăх, митинг пĕтсен, «Нескучнăй сада» смычкăна пымалла. Çавăнпа эпĕр митинг пĕтиччене тăмарăмăр: пырас халăха хирĕç тухма хушнă çĕре кайса тăтăмăр. Кĕтетпĕр. 8 сехет çитрĕ пулĕ. Тăрсан-тăрсан: «Килеççĕ, килеççĕ»,— теме пуçларĕç. Чăнах та вĕçĕ-хĕрри çук халăх кашăлтатса хăпарать.

Мĕнле халăх? Экскурсантсем: хресченсем, ĕçлекенсем тата ыттисем те питĕ нумай. Эпĕр чул кĕпер патĕнче кĕтсе тăраттăмăрччĕ. Пирĕн тĕлелле çитме пуçласан яра патăмăр чăвашла «Интернационал». Пирĕн тĕле çитрĕç те чарăнчĕç, нумайăшĕ çĕлĕкĕсене хыврĕç. Эпир вăйлăран вăйлă кăшкăратпăр. Юрласа пĕтертĕмĕр. «Какой народ? Из какой республики?» — тесе кăшкăрса ыйтаççĕ пиртен. Пирĕн хористсем: «Из Чувашской!» — тесе ответ параççĕ. «Молодцы чуваши! Урра чувашам! Да здравствует Чувашская республика»!— тесе кăшкăраççĕ хресченсем. Эпĕр тĕлĕнсе кайрăмăр. Пире йĕри-тавра çавăрса илчĕç те: «Идем с нами, чуваши!» — тесе хăйсемпеле пĕрле çыпăçтарса илсе карĕç.

Пирĕн хора 3-мĕш эстрадăна кайма хушса янăччĕ. Çавăнпа эпĕр халăхран уйрăлса «Нескучнăй сад» витĕр «Луна-Парк» тиекен площаде тухса карăмăр. Карăмăр-карăмăр — пĕр çирĕм минутран çитрĕмĕр. Пĕр духовой оркестр музыка каласа ларать. «Ăçта халăх?» — тесе ыйтатпăр. «Çук халăх, эпĕр те кĕтетпĕр халăха»,— теççĕ. «Луна-Парк» ăçтарах?» — тетпĕр. «Авă!» — теççĕ. Пыратпăр. Çутă сӳннĕ-мĕн, электричество çунмасть-мĕн, хунар та пăсăлнă. Артистсем те, халăх çук тесе, каялла пăрахса карĕç. «Пирĕн мĕн туса ларас? Атьăр эпĕр те

каятпăр»,— теççĕ хористсем. Пăрахрăмăр та карăмăр. Кайран сисрĕмĕр: «Луна-Парка» никам та кайман.

Çуллахи театра пырса кĕтĕмĕр. «Эпĕр сире чĕнме ятăмăр»,— теççĕ пире. «Эпĕр ăна хирĕç пултăмăр, пирĕн ĕнтĕ ăçта юрлас?» — тетпĕр. «Чим-ха»,— терĕ пĕри. Кĕрсе карĕ те тухрĕ: «Çакăнтах»,— терĕ. Вара эпĕр белоруссем хыççăн тухса юрларăмăр. Белоруссем умĕн тата хаххулсем (украинецсем.— Ред.) тухса юрланă, тет, политпросветăн трупписем темскерсем выляса кăтартнă, тет. Эпĕр юрличчен çурçĕр иртнĕ, халăх итлеме ывăнса çитнĕ. Эпĕр çавна сиссе, шикленсе тухрăмăр.

Тухсан кăшкăрса каларăмăр: «Атăл хĕрринчен килнĕ чăваш хорĕ юрлама тухрĕ»,— терĕмĕр. Шатăр-шатăр-шатăр ал çупма пуçларĕç. Çуллахи театрăн тӳпи çук та, хытă янрамасть. Çавăнпа пĕтĕм вăйпа кăшкăрса юрласа ятăмăр. Юрласа чарăнмассерен ал çупаççĕ. Пиллĕк-улттă юрларăмăр — çаплах ал çупаççĕ.

— Ташласа парăр! — тесе кăшкăракансем пур.

Ташша яра патăмăр. Тухрĕ те Табаков вĕçтерчĕ. Ал çупса ташлать. Тухрĕ те Иванов сикрĕ. Шулчă пек вĕçет.

— Девушек, девушек! — тесе кăшкăраççĕ.

Музыкçă пуçларĕ хĕрарăм ташши çеммине. Тухрĕç те хĕрсем шуçкаланса çӳреççĕ. Хитре яштак пĕвĕсене тăп тытса кăшт вăтанарах авкаланса çавăрнаççĕ. Пĕтерчĕç. Тухса карăмăр. Пирĕн музыка та, пирĕн ташă та, пирĕн тум та кăмăла кайнă: тепĕр хут занавес уçтарса, çĕнĕрен эстрада çине кăларса пире ал çупрĕç. Вара пирĕн кăмăл питĕ хĕпĕртерĕ: эпĕр чăваш ятне çĕртмерĕмĕр, малалла та çавăн пекех пулĕ тесе шанчăклантăмăр.

## IV. Иккĕмĕш смычкăра

— Трахвин! Трахвин! — тесе çуйăхать Левентей трамвай çинче.— Кунта лар! Кунта лар! Кунта пушă вырăн пур!

Трахвин малта вырăн тупнă. Левентей тĕреллĕ хитре кĕпе тăхăнса янă, çăпатапа. Вăл кăçкăрнинчен вагонри çынсем вилеççĕ кулса. Трамвая пĕтĕмпех хористсем кĕрсе тулнă, чăвашла пакăлтатаççĕ. «Эсĕр мĕнле халăх?» — тесе ыйтаççĕ. «Эпĕр чăвашсем»,— тет Левентей. «Чипер кала, мĕн чалăш кулатăн?» — тесе аяккинчен пăт тĕкет Левентее юлташĕ. «Ăçта каятăр?» — тесе ыйтаççĕ пиртен. «Нескучнăя, смычкăна юрлама».— «Эсĕр паян

юрлатăр-и вара?» — «Юрлатпăр».— «Апла пулсан пирĕн те каяс итлеме»,— теççĕ хăшĕ-пĕрисем. Вагон чарăнать. Тухатпăр. Вырăссем те пирĕнпе пĕрлех «Нескучная» пыраççĕ.

Паян эпĕр «Первăй эстрадăра» юрлатпăр. Ку эстрада аслă вырăнта, маччасăр, аяксăр, хыççăр — çӳллĕ кĕпер пек, хăпарса тăрсан пĕтĕм аслă уçланкипех курăнать, тавралла йывăç. Эпĕр выставкăран тухнă хресченсемпе пĕрле тĕрлĕрен юрăсем юрласа, çуйăхса пыратпăр. Эстрада çинче сартсем мусăк каласа пире хирĕç кĕтеççĕ. Пĕр çирĕм çын ытла: параппан çапса, тĕслĕрен тутутсем каласа çĕмĕрĕлсе тăраççĕ. Иккĕшĕ чалăш çур тăршшĕ трубасем тытнă, кĕмсĕртеттереççĕ. Пĕре пĕлĕт çинелле тăратса чĕтрентерет, тепре çӳлелле антарса кисрентерет. Уху-хук! Уху-хук! — тесе янтрать трубийĕ. Ерихон труби пек.

Мĕн тĕслĕ халăх çук! Политпросветăн труппи тухса хăйĕн искусствине кăтартрĕ. «Живой хаçат» тухса хăйĕн номерĕсене кăтартрĕ. Узбексем, сартсем, пушкăртсем, белоруссем тата ыттисем те. Акă ĕнтĕ пирĕн тухмалла. Çил хирĕç вĕрме пуçларĕ. Белоруссем юрлани те хытă илтĕнмест, тет, çил çапса аяккалла илсе каять, тет.

Эпĕр тухса тăтăмăр... Малтанах куç шарса каять... Халăх — тинĕс пек сарлака, шăп... пăхса тăрать. Миçе пин-ши? Пиллĕк-ши, улттă-ши? Пире çил вĕрет, чĕресем кĕртлетеççĕ. Дирижер пирĕн килти пекех, пĕртте вăтанмасть, пирĕн çине çавăрăнса пăхать те: «Чĕркуççисем чĕтреççим, э?» — тесе пире мыскара тăвать. Унтан çавăрăнать те хыттăн кăшкăрса калать:

— Атăл çинчен килнĕ чăвашсем сире пысăк салам пахалаççĕ!.. — тет.

Унччен те пулмасть: шатăр-шатăр-шатăр! тутарса, аслă уçланкă чĕтренет. Салам хыççăн юрлама тапратрăмăр...

Миçе юрă юрларăмăр-ши? Хамăр та астумастпăр. Тон питĕ çӳллĕ илнĕ, çăвара мĕнпур вăй çитнĕ таран каратпăр. Юрламассерен ырласа ал çупаççĕ, икĕ хутчен «бис» тесе тепĕр хут юрлаттарчĕç. «Ташласа кăтартăр тата!» — теççĕ. Пĕрре кайма тăнăскер тепре çаврăнтăмăр. Кармуншик Герасимов тапратрĕ чăсма хĕрарăм çеммине. Пирĕн хĕрсем ыталанса, ал явса, кăчăк туртса ташлаççĕ. Клементьева Степановапа пĕрле, Санюкпа Литюк уйрăммăн кĕлеткесене палăртаççĕ.

Линкка-линкка авкаланма
Юман хăма кирлĕ...
Халь те юман, тата юман,
Тата юман кирлĕ.

Йăкăш-йăкăш шуçкалама
Яка хăма кирлĕ...
Халь те яка, тата яка,
Тата яка кирлĕ.

Ик аллăма сулкалама
Кĕмĕл çĕрĕ кирлĕ...
Халь те кĕмĕл, тата кĕмĕл,
Тата кĕмĕл кирлĕ.

Чуп-чуп-чуп тума
Чипер ача кирлĕ...
Халь те чипер, тата чипер,
Тата чипер кирлĕ...

Çак сăмахсене каласа юрласа тăрать хор. Эпĕр пурте ал çупса юрлатпăр. Пирĕн Ванюк Карачăмĕ ташша илет пĕтĕм вăйран, туйра та ун пек сикмен пуль! «Хок! Хок!» тесе сикет. Хамăр юлташ лайăх ташланине кура чунăмăрсем хĕпĕртет. Пĕтерчĕ. Эй вара ал çупрĕç. Павлов юл[таш] маларах тухса каларĕ: «Халĕ ĕнтĕ пирĕн хор сирĕнпеле пĕрле пулса савăннишĕн сире: «Сывă пулăр!» тесе уйăрлать»,— терĕ. Вара эпĕр хĕре ăсатса янă чухне юрлакан юрра юрласа ярса уйăрăлса каялла антăмăр.

Эпĕр хыçалалла анса çитрĕмĕр — пире çаплах ал çупаççĕ. Вара эпĕр тепĕр хут хăпарса куçа курăнтăмăр: тинĕс пек аслă халăх пире ырласа ал çупса ăсатса ячĕ.

Белоруссем тухса юрланă хыççăн эпĕр начар тухать пулĕ тесе шухăшланăччĕ. Вĕсем нумаййăн пуçтарăнса килнĕ, вĕсем пирĕн пек ăпăр-тапăр пуçтарăнса килнĕскерсем мар, вĕсен — музыкăлла капеллăра вĕренекенскерсем, артистсем. Эпĕр —хурт ачисем, пĕри утă çулнă çĕртен тухса вĕçнĕ, тепри сухине пăрахса тухнă, унтан тепри тыррине вырассине вырмасăрах тухнă — пурте хресчен ачисем, тăпра хурчĕсем. Çавах та пулин хамăр ята çĕртмерĕмĕр иккен. Ансан, пирĕн чăвашсем чупса пычĕç: «Ну,— теççĕ,— пĕчĕк хор пулсан та, никамран та кая мар,— теççĕ,— сассем таса тесе, питĕ мухтаççĕ сире,— теççĕ,— хор питĕ маçтăр юрлать тесе калаççĕ»,— теççĕ. Пире Павлов юл[таш] тонсене юри пĕтĕмпех пĕрер тона çӳлерех парса пынă, çавăнпа эпĕр сасăсене питĕ çӳле илсе, хытă кăшкăрса юрланă пулнă.

Ку каç, иккĕмĕш смычка каçĕ, вара питĕ телейлĕ, мухтавлă, савăнăçлă каç пулчĕ пирĕн хоршăн.

1923